К84.89(=Чув)
С31
Ч-46656

Михаил Сениэль

# Малтанхи юр



Национальная библиотека ЧР
4-046656



МИХАЙЛ СЕНИЭЛЬ

# МАЛТАНХИ ЮР





ЧӐВАШ АССР КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1969

«Малтанхи юр» — авторăн пĕрремĕш кĕнеки. Пуçламăш шкул ачисем кулмалли те, шухăшламалли те тупĕç ку кĕнекере.

Мотторта вăрманăн
сасси илтĕнет.
Мотоцикл ларнă
Кĕркури çине,—

тенĕ «Çул çинче» сăвăра. Ак тамаша! Ним те ăнланма çук. Вуласа тухаççĕ те ахăлтатса кулаççĕ ачасем. Анчах та каярахпа шухăша каяççĕ: чим-ха, ара, чăнах та, мĕн тени пулать-ха ку? Тепĕр хут вулаççĕ. Йăлтах ăнланмалла иккен! Тӳнтерле çырса кайнă. Çавăн пек мелпе çырнăран, сăвă нумайлăха асра юлать.

Кĕнекери ытти сăвăсенче те çĕнни, ачасене савăнтармалли сахал мар.

Михаил Сениэль Тутар çĕрĕнче Аксу районĕнчи Саврăшпуç ятлă ялта 1940 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче çуралнă. Вăтам шкул, медицина училищи, университет пĕтернĕ.

Пичетленме «Хĕрлĕ Ялав» хаçатра 1956 çулта Хусанта пуçланă. Пирвайхи сăввине 1949 çулта, ку кĕнекене 1949—1957 çулсенче çырнă. Унăн сăввисем «Пионер сасси», «Тăван Атăл», «Хусан» тата ытти хаçатсемпе журналсенче тухнă.

И-46656

7—6—2
138—69М

Национальная библиотека
Чувашской республики



## ИРХИНЕ

Кайăксем юрлаççĕ
сулхăн ирхине,
савăнăç кӳреççĕ
йывăç пахчине.
Çавăнпа пуль манăн та
кулă сăн-питре...
Эп те кайăк пулăттăм,
юрлăттăм хитре.

## ХУР ЧӖППИ

Шимп-шимп чухнех хуса ҫӳреттӗм
сире ялан ҫырма хӗрне.
Утатăр сывă, ретӗн-ретӗн,—
анчах мӗн пулчӗ-ха пӗрне?
Сасси ҫинҫе, ҫуначӗ усăк,
ларать вăл пахчара пӗччен.
Ҫисем, ак ҫăкăр, шыв ӗҫ, тусăм,
тен, ешӗл курăк астивен?
Апап тесе калан йăвашшăн —
апап пуль ҫав, апап пуль ҫав.
Мӗскер тăвам-ши сыватасшăн?—
пӗлменлӗх кăмăла хуҫать.





## ÇЫРМА ХĔРРИНЧЕ

И хĕвелĕм, хĕвелĕм,
ачу шыва кайрĕ.
Турчăкупа туртса ил,
мелкӳпеле шăлса ил,
таканупа ăсса ил.
Юлташсемпе темĕнччен,
эп кĕтетĕп хĕвеле.
Тухсам пĕлĕт хыçĕнчен —
атьсем, çимĕк çитиччен
çиччĕ шыва кĕмелле.
Çиччĕ кĕнĕ, çиччĕпе
сахалтарах çимĕке —
çитмĕл çиччĕ кĕмелле.



## ТЫМАРСĂР ЙЫВĂÇ

Пĕр тымарсăр йывăç лартрĕ
пĕчĕк шăллăм пахчана.
Шăварать те шăварать вăл
çавă çамрăк хурăна.

Савăнса ĕмĕтленет хăй:
— Хурăн çурĕ папкине...
Айванскер шута илмест-çке
йывăççи тымарсăрне.

## ÇĔРЛЕХИ ХИРТЕ

Çӳлте кĕрлерĕ аслати.
Хаяррăн пĕлĕтсем шăвать.
Асса çӳрерĕ çил ачи,
пушшех вăйлатрĕ шăв-шава.

Хум-хумăн пĕлĕтсем иртсен,
вăтанчăк çăлтăрсем курнать.
Хирпе пыратăп вĕçтерсе,
малта пĕр хăйçути çунать.





## ПЫЛ ХУРЧĔСЕМ



Пахчара хурт сĕрлет.
Мĕкĕте тĕлĕрет.
Çывăрать çакăнта
кашни кун сулхăнта.
Ах... Мĕскер? Мĕкĕте
çухăрса ячĕ те
йăпăр-япăр тарать
урама пахчаран.
Çапкаланчĕ пĕрех,
кайрĕ ӳкрĕ çĕре,
макăрать, çухăрать:
— Ай-ай-ай! Хурт сăхать!
Сĕр-сĕрлеççĕ хуртсем
кахала йĕплесе.
«Пĕрехмай çывăран,
ĕçлемесĕр пурнан,
пахчара тек ан пул,
сăрă хурт!»— теççĕ пуль.







## ИКĔ СЕЛĔП

Икĕ селĕп — ик шăхличĕ —
тупнă тем çавăнмалли.
Пусмапа пĕри хăпарнă,
хăвăл ăшĕнче алли.

Эх пуплеççĕ икĕ тус:
— Михаха, теп, Михаха,
çеçи чĕппи иçе па-ха-ха.
— Çеçи чĕппи çаха-ха...





## КАÇХИНЕ

Вăштăр вĕрчĕ çурхи çил
уйăх тухнă чух.
Вăштăр вĕрчĕ те лăпланчĕ,
таçта кайрĕ — çук...

Улăхра хĕрсем тăсаççĕ
их хитре саспа
çуркунне çинчен ыр юрă
тулли кăмăлпа.

Йывăçсем тăраççĕ шăппăн —
чĕмсĕр мĕлкесем.
Сывлăм шăрçисем ялтраççĕ —
ахах пĕрчисем.

Çĕмĕртсем çеçкине çурнă,
çĕмĕртсем — лаштра.
Вĕсене те курчĕ уйăх,
курчĕ аякран.



## ÇЫВĂР, ШĂЛЛĂМ

Çывăр, шăллăм, паппа ту.
Эпĕр çиччĕн пĕртăван,
çичĕ ывăл, çич тăван.
Çывăр, шăллăм, паппа ту.

Кунĕпех ĕçлет анне:
уй-хире те ĕлкĕрет,
кил-çурта та ĕлкĕрет.
Кун каçа ырать анне.

Вăл пире пит юратать.
Алăра миçе пӳрне,
ыратать — çырт хуть хăшне.
Эс — качи, хыт «ыратан».

Çывăр, шăллăм, çывăрсам.
Ĕнтĕ тĕлĕрет анне,
тĕлĕкпе кулать анне.
Çывăр, шăллăм, çывăрсам.

Çырма леш енчи хирте
хускатса, ав, шăплăха,
çĕрĕпе тăвать суха
тимĕр лашипе атте.

Вăл та хытă юратать
хăйĕн çичĕ ывăлне.
Сана, хăйĕн Кĕçтукне,
хытăрах вăл юратать,
шăпăртрах пулма хушать,
кантăр, тет, аньни кăштах...

Шăллăм, пысăк уйăх та,
сана çывăрма хушать.

# ПУЛĂÇ

Ĕнер мар, виçĕмкун
экзаменĕ çăмăл ун
пулнă.
Тепри те çăмăлран
вăл тытать çырмара
пулă.
Халиччен çӳресе
пĕрехмай шапасем
лекнĕ.
Пулли вĕтĕрех,
атми çĕтĕкрех,
тет-мĕн.





## ЫРАШ ПУССИ

Хум хăвалать ыраш пусси.
Вĕçĕ-хĕррисĕр симĕс тинĕс
тăрасшăн мар ирпе те тикĕс.
Тăпах тăрсан мĕскер пур-ши?

Ыраш ларасшăн шăркана.
Тен, çавăнпа вăл пăлханать-тĕр.
Хумсем куçа та, хăлхана та
хупласçĕ тунсăхпа кăна.

Инçет йăсăрланать кăваккăн.
Кĕреп сукмак çине кĕçех.
Сукмакĕ ансăр, кукăр-макăр,
кашни кукрийĕ — шур чечек.

Пĕр ывăç туллиех татам-и,
çумне хушам утмăлтурат.
Класра ыр хĕрача пур — Таня,
çитсессĕнех чечек парап.



## ЁНЕСЕМ

Ёнесем тухаҫҫĕ, авă,
Кĕтӳпе уй хапхинчен.
Пăрахут сассин янравĕ
илтĕнет мĕкĕрнинче.

Ҫур пине те яхăн пур-тăр.
Сахал мар ку халлĕхе.
Пăлан пек патвар, ҫап-ҫутă,
хӳрисем — ҫĕре лекет.

Курăнаҫҫĕ пит маттуррăн
аслă улăх хăнисем.
Ҫиллисем таса та шурă—
ҫуллă сĕт хутаҫҫисем.

Куҫ тулли нумай ĕнешĕн
чунăм хытă савăнать.
Эх, пĕлесчĕ, хăшсене-ши
Кĕтерук аппа сăвать?



## ÇУЛ ÇИНЧЕ

*(Тӳнтерле сăвă)*

Мотортa вăрманăн
сасси илтĕнет.
Мотоцикл ларнă
Кĕркури çине.
Кĕркурийĕ — çĕнĕ,
çил пек ыткăнать.
Мотоцикл темĕн
чăл-чал пăхкалать.
Куçĕсем ак тухрĕç
пĕр кĕпер умне.
Кĕркури пуç ухрĕ
тур лаша енне.
Тилхепийĕ тытнă
Сăрнай Ванине.
Сăрнай Вани хыттăн
текех кĕçенет.

## КАЧАКА

Пирĕн качака хушка.
Хушăка вăл хĕсĕннĕ.
Ме-ке-кек! тет качака,
сасси тухать мĕскĕннĕн.

Ун патне эп пытăм та
ăна туртса кăлартăм,
унтан вăрçма тытăнтăм,
çапла сăмах каларăм:

— Урăх капла юрамасть
купăстана кăшлама,
пахча картине хуçма,
çимĕçе сиен тума.

Унтанпа усал хушка
улттă сикрĕ пахчама,
пахча картине хуçса
купăста пуç кăшлама.



# ÇУСА ÇАКНĂ КĔПЕ-ЙĔМ

Ватрĕç шăмшака, шывра шӳтерчĕç,
сивĕ çил лăскать пире хаяррăн.
Ӑантраран тытса вĕçетпĕр кунĕпе,
кунĕпе пĕр вырăнта вĕçетпĕр.

Ӑуççульсем те типнĕ ĕнтĕ пирĕн,
ĕнтĕ унсăрах сиксе йĕретпĕр.
Пĕр çеккунт та канăç çук, минут та.
Мĕн парса ку инкекрен тухар-ши?

Пĕр хутчен çапла типсе хăрсассăн,
утюгпа тепре чуна илеççĕ.
Мĕншĕн çакă нушана куратпăр?
Пылчăкпа хуралнăран пуль тетпĕр.



И-466556
Национальная библиотека
Чувашской Республики



## ПИОНЕРКА

Вĕр-çĕнĕ галстук йăмăх ун,
çи-пуçĕ тап-таса.
Çӳрет ман пĕчĕк йăмăкăм
тăваттăмĕш класа.

Паян çут кулă, савăнăç,
ача сăн-питĕнче:
паян ун класĕ çапăннă
район хаçатĕнче.

Чăнах та, питĕ тухăçлă
шкулти çырла пахчи.
Нихçан асран ку тухмĕ çав:
маттур кашни ачи.

## ÇАВРА ÇИЛ

Чимĕр! Çил хускалчĕ,
тусана тустарчĕ,
ак чупса пырса çĕклет
ват хуралçă çĕлĕкне.

Тăкăрлăкри вĕренешĕн
ун çилли пулмарĕ темшĕн.
Калитке умне çитсен,
çапрĕ-çке ташша сиксех...
Çил хире тухса кайсассăн,
ял шăпланчĕ.
Пĕтрĕ сасă.





## ÇУРАЛНĂ КУН

Ташлать сив çумăр чăрсăр ташă
е алхасать чарусăр çил.
Апла пулсассăн та, юлташăм,
кĕрхи çак вăхăт — чун уççи.
Çĕн саманан Çуралнă кунĕ
вăл пирĕншĕн — чи савăк кун...
Халăхăма чăн пурнăç кӳнĕ
Октябрь, ӳсет мухтавлăху.
Сан хыççăн кайнисем пит йышлă,
телей туптаççĕ пур çĕрте.
Тивлетлĕ саманамăр, йышăн
чи чыслă парнесем пиртен.
Ĕçе пули-пулми тумашкăн
эпир тĕллевсĕр-мĕнсĕр мар.
Пин-пинĕн,
пысăккăн,
хавассăн
утатпăр коммунизма.



## МАЛТАНХИ ЮР

Ир-ирех юр çурĕ, çурĕ,
таврана шап-шурă турĕ.
Чарăнман-ха халĕ те,
каççăр чарăнмасть пуль, тен.

Кăмăл, юр пекех çуталтăн.
Юр чĕнет, юр илĕртет.
Ак часах тухса чупатăп
йăлтăр-ялтăр йĕлтĕрпе.

Йĕрĕм ÿкĕ тÿрĕ-тÿрĕ.
Уй сăн-пичĕ шурă-шурă.
Йĕр хупланĕ юр айне —
иртрĕ кайрĕ кĕркунне.

Пурçăн тетчĕ ял урамĕ
ешĕл хурăн кăтрине,—
хĕлĕпех асра упранĕ,
юр хуплаймĕ асрине.



## КАÇ ПУЛЧĔ

Хĕрелсе хĕвел ансассăн,
уйăх тухрĕ тӳпене.
Пĕлĕт çăлтăр сапрĕ ячĕ.
Пĕлме çук шутне-йĕрне.

Апат çинĕ. Урок хатĕр.
Тахçанах çывăрмалла.
Салтăн, шăллăм, салтăн хăвăрт,—
ирхине ир тăмалла.

## АННЕ ЮРРИ

Чӗнтӗрленӗ кӗпер айӗнче
чӗнтӗрлӗ тутӑрсем ҫурӑмӑр...
Ҫӗнӗ саманара ҫуралтӑмӑр,
ҫавӑнпа телейлӗ пултӑмӑр.

Пӗчӗккӗех тутӑр, шур тутӑр,
юратнӑран ялан ҫыхатӑп.
Айхаях, ачамсем, ҫунатӑмсем,
савӑнӑҫа пула юрлатӑп.

Вӑштӑр кӑна вӑштӑр ҫил вӗрсен,
ма кашлать-ши хура вӑрманӗ?
Пирӗн пуҫӑмӑра ҫӑмӑл килсен,
ма урать-ши усал тӑшманӗ?



# ЮР ÇУСАН

Лапка-лапка юр çусассăн,
пĕтĕм тавра шап-шурах.
Ачасем, упа тусассăн,
пĕр кулаççĕ ах-ха-хах!
Итлĕр-ха эсир, туссем,
вĕренме те манар мар.
Урамран киле çитсен,
урок тума тытăнар.





## УЙĂХ ПЫТАННА...

Шур юр çăвать. Пăхмашкăн савăк
вăл шăппăн çеç тăкăннинс.
Эпир—атьсем—таçта васканăн
хăпаратпăр ту çине.

Ялçум çырмак çыранĕ чăнкă.
Уйăх тухсассăн каçхине—
сахал ӳкетĕн. Тухмасассăн—
чикеленетĕн пусхĕрлех.

Тăман çăвать. Пытанчĕ уйăх
шур мамăк пĕлĕчĕ хыçне.
Эпир те килелле васкатпăр
юмахçă асанне патне.

# ÇИЛ АЧИ

Кантăкран шаккарĕ, шик шăхăрчĕ, пăхрăм —
çук никам.
Тăхтаса та тăтăм юриех пĕр ăстрăм — çук никам.
Пиншака уртса пусма çине те тухрăм,
чăрмантарнăшăн вăрçса та тăкрăм — çук никам.
Тĕлĕнсе те аптраса уттартăм урама,
урамра та телефон юпи çеç, çук никам.
Шикленсе эп кайрăм, эп пуçларăм хăрама.
Кантăкран каллех шаккарĕç. Çук никам.





## ÇAMРĂК КОММУНАР

Тĕллеççĕ, тăрăшса тĕллеççĕ.
Ӳкет. Сиксе тăрать. Чăмăрĕпе юнать.
Ķула-кула чăрсăрскере переççĕ.
Хавассăн кăшкăрать. Юрлать:
«Ķоммуна сывă пултăр!..»
Ķĕрс!!
Ах!
Хупларĕ тĕтĕм.
Ача — шăпах.
Анчах каллех çĕкленчĕ. Пичĕ юнлă.
«Ан савнăр, çăхансем! Ķоммуна çĕнтерет!..»
Ķоммунарсем ĕнтĕ сахаллăн юлнă.
Версалецсем хĕсеççĕ çĕнĕрен.
Ача енне ак вăйлă залп кĕрлерĕ.
Тытăçу тан мар, хăруш, хăруш.

Сан пек пуласшăн — инкекре эп,
баррикада ачи Гаврош.

# МАРТ

Кăнтăр çилĕ лĕп те сулчă.
Хĕл тек мухтанса çӳреймĕ.
Нӳрлĕхпе çанталăк тулчĕ,
ту-сăртсем йĕпе çеремлĕ.

Акана колхозлă ялăм
çĕнĕ машинсем кӳлесшĕн.
Çĕкленет-çке чун-хавалăм
хатĕр сеялка-сӳрешĕн.



Ав мӑлатукпа шаккаççӗ
тимӗрçсем пӗр чарӑнмасӑр.
Хурçӑ ӑйӑрсем сас пачӗç
сыввӑн,
паттӑррӑн,
хавассӑн.





## ЯТ ХУНИ

Ял Советӗнче пӗр ашшӗ
пепкине ят ҫыртарать.
Ачи — хӗр. Епле хурать-ши?
Чим, кӑштах тӑхтас ара...

Тахҫанах шутланӑ ашшӗ,
ним тӑмарӗ кӗттерсе:
«Зоя ят хӗре парасшӑн,
героя хисеплесе».

## ЙĔТЕМ ÇИНЧЕ

Зернопульт — йĕтем фонтанĕ —
вĕççĕр «çумăр çутарать».
«Ылтăн! Ылтăн!» тетĕп эпĕ
сарăлса выртан тырра.

Транспортер-кĕпер пит хăвăрт
ăсатать машинсене.
Тасатан-типĕтекенĕн
васкама текех тивет.

Йăлтăр-ялтăр электрица
хуса ячĕ тĕттĕме.
Нимле çумăр йĕпетеймĕ
шифер витнĕ йĕтеме.

Эй, юлташ, ĕçлер-ха харсăр,
пулăшма хастарлăх пур.
Пултаратпăр, тăрăшатпăр...
Савăнса кулать аппу.



# НИ УНТА, НИ КУНТА



Вĕренес килмест юлхавăн,—
икĕ уйăх вĕренсе
миçе «иккĕ» илчĕ авă,
«йăлăхтарчĕ шкул» тесе.

Янтă çăкăр урăх çимĕ,
намăс, тет, ăна çиме.
Ĕç патне туртать чун имĕш —
тухрĕ кайрĕ ĕçлеме.

Амăшне те пăхăнмарĕ,
пăхмĕ шкул енне ача,
хĕрттерсех ĕçле пуçларĕ,
хуйхă çук халь ун пачах.

Миçе кун ĕçе çӳрерĕ —
пĕлме çук. Пуçне усать
çак «ĕçчен». «Ĕç тармĕ,—терĕ,—
вĕренмешкĕн чун туртать».





## ÇĂЛКУÇĔ

Çĕр айĕнчен тапса тăрать
тăрна куç пек çăлкуçĕ.
Çусассăн, ыррăн уçăлать
çак шывпала пит-куçăм.
Асамлă шыв... Унта вăй-хал
вĕрет пĕр иксĕлмесĕр.
Ун умĕнче тăратăп халь
ывăннине пĕлмесĕр.

# МАНӐН ЁМӖТ

Тулта çил-çапкаланчӑк кас-кассӑн
кантӑк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланӑçемӗн
сӑвӑ çырас,
сӑвӑ çырас килет.

Эпӗ халӗ çамрӑк ача çеç-ха.
Ӳссе çитӗп, пулӑп ӑслӑ çын.
Хӑшӗсем: учӗнӑй, текелеççӗ.
Итлеместӗп эпӗ. Қалӗçин.

Тулта çил-çапкаланчӑк кас-кассӑн
кантӑк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланӑçемӗн
поэт пулас,
поэт пулас килет.



## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Ирхине | 3 |
| Хур чĕппи | 4 |
| Çырма хĕрринче | 5 |
| Тымарсăр йывăç | 6 |
| Çĕрлехи хирте | 7 |
| Пыл хурчĕсем | 8 |
| Икĕ селĕп | 9 |
| Қаçхине | 10 |
| Çывăр, шăллăм | 11 |
| Пулăç | 12 |
| Ыраш пусси | 13 |
| Ĕнесем | 14 |
| Çул çинче | 15 |
| Қачака | 16 |
| Çуса çакнă кĕпе-йĕм | 17 |
| Пионерка | 18 |
| Çавра çил | 19 |
| Çуралнă кун | 20 |
| Малтанхи юр | 21 |
| Қаç пулчĕ | 22 |
| Анне юрри | 23 |
| Юр çусан | 24 |
| Уйăх пытаннă | 25 |
| Çил ачи | 26 |
| Çамрăк коммунар | 27 |
| Март | 28 |
| Ят хуни | 30 |
| Йĕтем çинче | 31 |
| Ни унта, ни кунта | 32 |
| Çăлкуçĕ | 33 |
| Манăн ĕмĕт | 34 |

*Для младшего школьного возраста*

**Михаил Павлович Сениэль**

**ПЕРВЫЙ СНЕГ**

**Стихи**

На чувашском языке


Редактор *Г. Ф. Трофимов*
Художник *В. И. Агеев*
Худож. редактор *Э. М. Юрьев*
Технич. редактор *Г. П. Петров*
Корректор *Т. Н. Сергеева*

Сдано в набор 28/IX-1968 г. Подписано к печати 19/II-1969 г. Изд. № 138/69. Формат 60×84 1/16. Типогр. № 2. Физич. печ. л. 2,25. Условн. печ. л. 2,1. Учетно-изд. л. 1,66. Заказ № 5263. Тираж 5000 экз. Цена 10 коп.

Чувашкнигоиздат,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.

15.e)

10 коп.

